# Сказка Лиса и дятел



Пырать пӗр хӑмӑр Тилӗ йӑпӑртатса вӑрманпа. Ун ҫулӗ ҫине сунарҫӑ шӑтӑк алтса хунӑ пулнӑ. Чупса пынӑ ҫӗртенех йӑнкӑлт анса кайрӗ Тилӗ ҫав шӑтӑка. Сиккелет-сиккелет, кускалать-кускалать — ниепле те тухаймасть.

Шӑтӑк тӗпӗнче Тилӗ вӗткеленнине йывӑҫ тӑрринче ларакан Улатакка курать.

— Мӗн ӗҫлен, Тилӗ тус? — тесе ыйтать унран Улатакка.

— Пусӑ чаватӑп, — тет Тилли.

— Мана та алтса памӑн-ши? — тет Улатакка.

— Алтса парасси парӑттӑм та, анчах малтан ку пусӑ пурине ярса пӗтерес пулать ҫав. Пулӑш мана кӑштах, вара пӗрлех тытӑнӑпӑр, — чееленет хӑмӑр Тилӗ.

— Мӗнпе пулӑшам эп сана? — ӑнланаймасӑр ыйтать Улатакка.

— Сана йывӑр ӗҫех хушмастӑп, эсӗ мана пура яма йывӑҫ турачӗсене кӑна пар, — тет Тилли.

Тытӑнчӗ Улатакка Тилле пулӑшма. Туратран турата ларса шӗвӗр сӑмсипе шак! тутарать те пӗр турат ӳкерет, шак! тутарать те теприне касса ярать.

Пухӑннӑ туратсене Тилӗ патне пыра-пыра пӑрахать. Пуҫларӗ Тилли вӗсене шӑтӑка купалама. Аппалансан-аппалансан, шӑтӑкӗ тулса та ларчӗ.

— Ну, мӗнле, ӗҫ пӗтрӗ-и? — ыйтать Улатакка.

— Пӗтрӗ, — тет Тилли.

— Апла пулсан атя ман пата пусӑ алтма, — чӗнет Улатакка.

— Пырасси пырӑп та-ха, анчах эс мана мӑкарич шучӗпе кӑвас ӗҫтер, — тет Тилли.

Улатакка килӗшрӗ, иккӗшӗ кӑвас сутакана шырама тухса кайрӗҫ.

Такмак пасарне ҫитеспе ҫаксене хирӗҫ пӗр усламҫӑ килет.

— Ав пуян Сахар пасара кӑвас сутма каять, пытанса вырт тӗм хушшине, — тет Улатакка.

Тилли йӑпӑр-япӑр пытанчӗ. Улатакка Сахар лавӗ ҫинчи пичке тӑррине хӑпарса ларчӗ те шӗвӗр сӑмсипе шаккама тытӑнчӗ. Шаккасан-шаккасан пичке хӑми шӑтса тухрӗ. Сирпӗнет кӑна пыл кӑвас юман пичкерен.

Улатакка хӑйӗн ӗҫне пӗтерсен шак! тутарчӗ Сахара ҫамкинчен. Эх, ҫилленсе кайрӗ Сахар, тытӑнчӗ хӑвалама. Улатакки юриех аялтан кӑна вӗҫсе пырать.

Кайӑк хыҫҫӑн чупса хӑшканӑ ернӗ хушӑра Сахарӑн пичкери кӑвасӗ йӑлтах юхса тухрӗ. Тӗмсем хушшинче пытанса выртакан Тилӗ хӑвӑртрах чупса тухса кӑваса ӗҫме тытӑнчӗ. Хырӑмӗ туличченех ӗҫрӗ.

Пуян Сахар кайӑка хӑваларӗ-хӑваларӗ те нимӗнсӗрех килне таврӑнчӗ.

— Ну, епле, ӗҫрӗн-и? — ыйтать Улатакка Тилӗрен.

— Ӗҫрӗм, ӳсӗрӗлсех кайрӑм, — тавӑрать Тилли тайкаланса.

— Апла пулсан атя пусӑ алтма.

— Каясса кайӑпӑр та-ха, анчах эс мана малтан култарса кӑтарт, — тет Тилли.

— Юрӗ, атя ман хыҫҫӑн, — килӗшрӗ лешӗ.

Тилӗпе Улатакка Такмак ялӗн анкарти хыҫнелле шӑвӑнчӗҫ.

Пуян Сахар ывӑлӗпе пӗр тарҫи йӗтем ҫинче ясмӑк ҫапаҫҫӗ. Улатаккапа Тилӗ ҫаксем тӗлне ҫитсен темӗн пӑшӑлтатса илчӗҫ те чарӑнчӗҫ. Тилли карта хушӑкӗ витӗр йӑпшӑнсах пӑхса выртать, Улатакки Сахар ывӑлӗн пуҫӗ ҫине кайса ларчӗ те шӗвӗр сӑмсипеле шак! тутарчӗ ҫамкинчен.

— Ай-ай, Микихвер! Ҫап ку кайӑка пуҫӗнчен! — тесе кӑшкӑрса ячӗ Сахар ывӑлӗ ҫамкине хыпашласа.

Тарҫи кайӑка ҫапас тесе нимӗн шухӑшласа тӑмасӑрах яра пачӗ кӑна тӑпачпала пуҫӗнчен. Сахар ывӑлӗ тӳп кайса ӳкрӗ те тӑнсӑр пулса выртрӗ.

Карта хушӑкӗнчен пӑхса выртакан Тилӗ варне тытнӑ та йӑвалана-йӑвалана кулать. Кулсан-кулсан Улатакки кунран ҫапла ыйтать:

— Ну мӗнле, пусӑ алтма каятпӑр-и? — тет.

— Каясси кайăпăр та-ха, юлашкинчен хăратса кăтарт мана, — тет Тилли.

— Юрĕ, Тилĕ тус, хăрасах килет пулсан атя хам хыççăн, — тет Улатакка.

Калаçса татăлчĕç те хайхисем шутарчĕç ял вĕçнелле.

Çитсе тухрĕç Тимухха старикĕн килĕ патне. Хĕвел анса ларчĕ, Тимухха лашине шăварма тухса кайрĕ. Хапхине хупмасăрах хăварчĕ.

Улатакка Тилле хапха çумне вырнаçма хушрĕ, хăй хапха тăррине ларса шаккама тытăнчĕ. Шак-шак! тутарать, шак-шак! тутарать.

Тимуххан килĕнче виçĕ усал йытă пулнă. Хапхана шакканă сасса илтсенех кусем сикрĕç тухрĕç те урама, тытăнчĕç Тилле хăвалама. Эх, хăвалаççĕ, эх, хăвалаççĕ. Тилĕрен пăс кăна тухса пырать. Акар йыттисем Тилле вăрманах хуса кĕрсе кайрĕç. Тилли ниçта кайса кĕреймен енне йăкăлт сиксе кĕчĕ пĕр юман хăвăлне. Йытăсем юман тавра вĕре-вĕре çаврăнаççĕ.

Хăраса ӳкнĕ Тилĕ юман хăвăлĕнче хăйĕн урисенчен ыйтать:

— Эсир мĕнле килтĕр: хăраса-и, хăрамасăр-и? — тет.

— Эпир мĕнпур вăйпа малалла тапаçланса килтĕмĕр, — теççĕ урисем.

Тилĕ хăлхисенчен ыйтать:

— Эсир мĕнле килтĕр? — тет.

— Эпир йăпшăнса-йăпшăнса килтĕмĕр, — теççĕ хăлхисем.

Тилĕ хӳринчен ыйтать:

— Эсĕ тата мĕнле килтĕн? — тет.

— Эпĕ кĕç тытаççĕ-и, кĕç çиеççĕ-и тесе килтĕм, — тет хӳри.

— Ах, мур, эс мана çапла шеллетĕн-и-ха, йытăсене çитересшĕн пулнă-и-ха? — тет кăна хирĕç Тилли çилленсе. — Ак парам-ха сана уншăн йытăсене ывăтса, — тет.

Çак сăмахсемпе Тилĕ хăй хӳрине юман çурăкĕнчен тулалла кăларса ячĕ те, усал йытăсем ăна çавăнтах ярса илчĕç, унтан Тиллине хăйне те сĕтĕрсе кăларса туртса çурчĕç.

Юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.